26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943 ИЮНЬ 16 ЮНКУН 124(6361) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Вырӑнти промышленноҫӑн ӗҫне тӑтӑшах вӑйлатса пырар

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вырӑнти промышленноҫӑн вырӑнӗ татах та ытларах ӳсрӗ. Унӑн халӗ, тӑван Хӗрлӗ Ҫара кирлӗ продукци парса тӑнипе пӗрлех, ӗҫсыннисем валли куллен кирлӗ таварсем ҫителӗклӗ туса кӑлармалла.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ 1941 ҫулхи январӗн 9-мӗшӗнче «Вырӑнти чӗртавартан куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине ӳстересси ҫинчен» ятарласа постановлени йышӑнчӗ. Ку постановленире вырӑнти промышленноҫӑн мӗнле ӗҫлемеллине уҫҫӑн кӑтартса панӑ.

Вырӑнти промышленноҫӑн хӑйӗн умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пыма пур условисем те ҫителӗклӗ. Вӑл хӑйне кирлӗ чӗртаварпа ӗҫ вӑйне вырӑнтах тупма пултарать. Ку ӗҫре ертсе пыракансем пултаруллӑ та пуҫаруллӑ пулни, вӗсен ӗҫпӗн чунтан тӑрӑшни ҫеҫ кирлӗ. Ӗҫсыннн депутачӗсен райсовечӗсемпе парти райкомӗсен вырӑнти промышленность ҫине большевикла тимлӗхпе ҫаврӑнса пӑхас пулать, районри мӗнпур майсемпе тата чӗртаварсемпе анлӑн усӑ курмалла.

Нумаях пулмасть Чӑваш АССР Совнаркомӗ промысла кооперацин артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943 ҫулхи май уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухрӗ. Совнарком инвалидсен кооперацийӗн артелӗсем енӗпе ӑмӑртура Канашри «Красный воин» (правлени председателӗ Корчагин юлташ), Чакаларти (Ишлей районӗ) «Красный стрелок» артельсем мала тухнӑ тесе йышӑнчӗ. «Красный воин» артель Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Промысла кооперацийӗн артелӗсем енӗпе Канашри Сталин ячӗпе тӑракан (председателӗ Баранов юлташ), «Авангард» (председателӗ Васильев юлташ), Октябрьски районри Караньялӗнчи «Труд» артельсем ӑмӑртура ҫӗнтерӗҫ тесе йышӑннӑ.

Канашри Сталин ячӗпе тӑракан артель май уйӑхӗнчи плана пӗтӗм продукци енӗпе 229 процент, ширпотреб енӗпе 350 процент пурнӑҫланӑ. Халӗ уйӑхри плансене ирттерсе тултарнипе пӗрлех известь тата промышленноҫа кирлӗ ытти япаласем туса кӑларас ӗҫе пуҫарать. Артель коллективӗ ҫӗршыв умӗнчи хӑйӗн обязанноҫӗсене туйса ӗҫлет. Стахановецсем С. Слепов, Т. Шапкин, В. Фадеев юлташсем производство планне кашни куллен 250 процентран кая мар тултарса пыраҫҫӗ.

Канашри Сталин ячӗпе тӑракан артель тунӑ ҫак ҫитӗнӳсем рабочисемпе работницӑсем тӑрӑшса ӗҫленинчен кӑна мар, ӗҫсынни депутачӗсен горсовечӗпе ВКП(б) горкомӗ вырӑнти промышленность ыйтӑвӗсемпе тӑтӑшах интересленнинчен, ӗҫсыннисем валли кирлӗ таварсем туса кӑларас ӗҫе тивӗҫлипе ертсе пынинчен те килет. Кунта вырӑнти промышленность ыйтӑвӗсене час-часах сӳтсе-яваҫҫӗ. Предприятисемпе артельсене ӗҫре пулӑшу парса тӑраҫҫӗ. Анчах ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр районсенче вырӑнти промышленность ӗҫӗ хӑй тӗллӗн пулса пырассине шанса лараканӗсем те пурха. Ку тӗлӗшпе Йӗпреҫ, Хӗрлӗ Чутай, Красноармейски, Шӑмӑршӑ районӗсене илсе кӑтартма пулать.

Ҫак кунсенче Чӑваш АССР Совнаркомӗ асӑннӑ районсенчи райсовет исполкомӗсем вырӑнти промышленность ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленине, артельсене вӑхӑтра пулӑшу парса тӑманнине, ҫавна пула кунти артельсем правительство заданине пурнӑҫласа пыманнине ҫивӗччӗн асӑрхаттарчӗ. Ҫав ҫитменлӗхсене вырӑнти промышленность работникӗсен халех пӗтермелле.

Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗ ҫине ответлесе, Мускав хулинчи промкооперации работникӗсем иккӗмӗш квартал планне тата малтанхи сурсул планне срокчен тултарассишӗн РСФСР-ти промысла кооперацийӗн мӗнпур работникӗсене чӗнсе каларӗҫ. Ҫак патриотла чӗнӗве пирӗн республикӑри артельсем те хапӑл туса йышӑнчӗҫ. Вӗсем тунӑ ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе, татах та пысӑк обязательствӑсем илчӗҫ. Ҫав обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртессишӗн ҫине тӑрса кӗрешмелле.

Вырӑнти промышленность Хӗрлӗ Ҫар валли боеприпассемпе снаряжени туса кӑларас ӗҫре шултӑра промышленноҫа чылай пысӑк пулӑшу парать. Ҫавӑнпа пӗрлех вырӑнти промышленноҫӑн республикӑри халӑх валли куллен кирлӗ таварсен тӗп массине туса парас пулать. Фронтпа тыл пире вӑрҫӑ продукцийӗ, куллен кирлӗ таварсем ытларах туса кӑларма, халӑхӑн йӑлари ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес ӗҫе лайӑхлатма хушаҫҫӗ.

Юлса пыракан артельсем! Халӗ, Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем фронтра гитлерла йӗркесене хирӗҫ вилӗмле кӗрешнӗ чухне, пӗтӗм совет халӑхӗ ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫленӗ чухне, начар ӗҫлеме юрамасть.

ВКП(б) райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсен вырӑнти промышленноҫа большевикла ертсе пымалла, кашни предприяти, артель хӑйне панӑ плансене ытлашшипех тултарса пымалла тӑвассишӗн кӗрешмелле. Фронтпа тылпа икӗ хут ытларах вӑй хурса ӗҫлер, рабочисен сахалрах йышӗпех ытларах продукци туса кӑларар!

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 14-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июнӗн 14-мӗшӗнче фронтра пысӑк улшӑнусемех пулман.

* * *

Июнӗн 13-мӗшӗнче пирӗн авиацичӑсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче боецсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинӑран кая мар пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, 3 артиллери батарейине пусарса лартнӑ, тӑшманӑн чугунҫул ҫинчи темиҫе эшелонне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнче пирӗн чаҫсем нимӗҫ пехотине пӗр рота таран вӗлерсе тӑкнӑ, пӗр артиллери батарейине тата пулемета пӗтерсе лартнӑ. Уйрӑм участоксенче тӑшман пехотин ушкӑнӗсем пирӗн оборнӑн малти хӗррине разведка туса пӗлме хӑтланнӑ. Пӑшалсемпе тата пулеметсемпе персе, тӑшман разведчикӗсене сапаласа янӑ.

* * *

Мценскран сурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн подразделенисем вырӑнти ҫапӑҫусем туса пынӑ. 3 артиллери батарейине тата миномётсен 2 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ, 100 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла вӗлернӗ.

Сывлӑшри ҫапӑҫусенче пирӗн летчиксем тӑшманӑн 2 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Унсӑр пуҫне тата пӗр нимӗҫ бомбардировщикне зенитнӑй артиллери персе ӳкернӗ, 2 нимӗҫ летчикне тыткӑна илнӗ.

* * *

Лисичанск районӗнче тӑшман автоматчикӗсен отрячӗ Сурҫӗр Донец юханшывӗн сулахай хӗррине каҫма хӑтланнӑ. Боевой охраненири красноармеецсем пеме пуҫланӑ та темиҫе вуншар гитлеровеца вӗлернӗ. Тӑшман салтакӗсем нумайӗшӗ шыва путнӑ. Пӗр чаҫӑн артиллеристсем гитлеровецсене пӗр ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

Пирӗн летчиксем тӑшман танкӗсен колонни ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсем нимӗҫ танкӗсем ҫине тӳрремӗнех пырса ӳкни палӑрнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫура тӑшманӑн 2 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Сумы районӗнче пӗр чаҫӑн разведка тӑвакан ушкӑнӗ тӑшман йышӑнса тӑракан халӑх пурӑнакан пунктра вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Штык вӗҫҫӗн пуҫланса кайнӑ тытӑҫура пирӗн боецсем 20 гитлеровеца вӗлерсе тӑкнӑ, пӗр пулемет тата темиҫе винтовка тытса илнӗ. Пӗр соединенири снайперсем 88 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Волхов фронтӗнче пирӗн подразделенисем нимӗҫ салтакӗсене пӗр рота ытла вӗлерсе тӑкнӑ. Артиллери 10 дзота, 9 блиндажа тата 2 наблюдательнӑй пункта ишӗлтерсе антарнӑ тата тӑшманӑн 11 пулемечӗпе 6 миномётне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Калинин облаҫӗнчи партизансен отрячӗ халӑх пурӑнакан пӗр пысӑк пунктра вырнаҫнӑ нимӗҫ гарнизонне сасартӑк тапӑннӑ. Совет патриочӗсем 60 гитлеровеца ытла вӗлернӗ, пӗр танк, автомашина тата темиҫе станковӑй пулемет пӗтерсе тӑкнӑ. Тата, унсӑр пуҫне, партизансем пӗр юханшыв урлӑ каҫмалли кӗпере тата тӑшманӑн продовольстви складне ҫунтарса янӑ.

* * *

Тӑшман тылӗнчен разведчиксен ушкӑнӗпе таврӑннӑ старши лейтенант Фролов (Карели фронтӗ) нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем тыткӑна лекнӗ совет боецӗсене тискеррӗн асаплантарни ҫинчен каласа кӑтартнӑ. Заполярьери сопкӑсенчен пӗрин ҫинче пиртӗн разведчиксем чуна хӑратакан сӗмсӗр япала курнӑ. Нимӗҫсем пӑрахса кайнӑ землянка сывӑхӗнче чулсем хушшинче гитлеровецсем туртса сурса пӗтернӗ 9 красноармеец вилли выртнӑ. Инҫех те мар, сӳнсе ларнӑ вут вырӑнӗ ҫумӗнче, кӑмрӑкланса кайнӑ боец вилли выртнӑ, унӑн ҫаврине фашистла ирсӗрсем пысӑк шалча ҫапса кӗртнӗ. Фашистсем асаплантарса вӗлернӗ совет воинӗсен ӳчӗсем умӗнче пирӗн разведчиксем нимӗҫсен фашистла ирсӗр бандичӗсене нимӗн хӗрхенсе тӑмасӑр хирӗҫ тавӑрма тупа тунӑ.

* * *

Албанире Итали оккупанчӗсене хирӗҫ партизансен пысӑк отрячӗсем нумайӑн кӗрешеҫҫӗ. Албани патриочӗсем тӑшманӑн темиҫе гарнизонне ҫавӑрса илнӗ. Нумаях пулмасть партизансем Албанипе Черногори чикки сывӑхӗнче оккупантсенчен 30 яла ирӗке кӑларнӑ. Оккупантсемпе ҫапӑҫса, партизансем фашистла салтаксене нумай пӗтерсе тӑкнӑ.

Июнӗн 15-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 15-мӗшӗ ирхи тенӗ чух ҫӗрле фронтра нимӗнле пысӑк улшӑнусем те пулман.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнче пӗр чаҫӑн артиллеристӗсем нимӗҫсен 7 дзочӗпе блиндажне ишӗлтерсе антарнӑ, пӗр орудине тата темиҫе пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Кӗҫӗн лейтенант Хазов юлташ ертсе пыракан 9 снайпер юлашки кунсенче 93 нимӗҫ салтакӗпе офицерне вӗлернӗ.

* * *

Мценскран сурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тӑшман пехоти, хӑйӗн ҫухатнӑ позицийӗсене каялла тавӑрас тесе, танксемпе авиаци пулӑшса пынипе темиҫе хут та атака тунӑ. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янӑ, вӗсене пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ. Пирӗн подразделенисем пӗр участокра кӑна 200 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Зенитнӑй артиллери 3 нимӗҫ самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Белгород районӗнче пирӗн боецсем ҫӗрле совет позицийӗсем патнелле пыракан нимӗҫ разведчикӗсен пысӑк ушкӑнне асӑрханӑ. Меллӗ вӑхӑт суйласа илсе, гварди красноармеецӗ Касин Абдурахманов разведка пуҫӗнче пыракан нимӗҫ офицерне тапӑннӑ та ӑна тыткӑна илнӗ. Ҫав вӑхӑтра пирӗн боецсем ытти гитлеровецсене тапӑнса вӗсенчен нумайӗшне пӗтерсе тӑкнӑ. Абдурахманов юлташ тыткӑна илнӗ нимӗҫ офицерне хӑйӗн чаҫӗн штабне илсе пынӑ.

* * *

Дон ҫинчи Ростовран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн миномётчиксем 5 нимӗҫ блиндажне ишӗлтернӗ, ултӑ кӗпҫеллӗ миномётсен батарейине тата 4 пулемет точкине пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр участокра нимӗҫ отрячӗ ҫапӑҫса разведка тума хӑтланнӑ. Гитлеровецсене пирӗн оборонӑн малти хӗрри патне ҫитиччен сапаласа янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн темиҫе вуншар вилли выртса юлнӑ.

* * *

Волхов фронтӗнче пирӗн чаҫсем тӑшман ҫине персе тӑнӑ. Нимӗҫсен 10 дзотне тата 8 блиндажне ишӗлтернӗ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, гитлеровецсене пӗр рота таран сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Житомир облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ, засадӑран ҫӑмӑл автомашинӑна персе, икӗ нимӗҫ офицерне тата Коростень хулинчи нимӗҫ полицин начальникне вӗлернӗ. Партизансен тепӗр ушкӑнӗ шыв урлӑ хывнӑ кӗпере сирпӗнтерсе янӑ. Боженко ячӗпе тӑракан отрядри 5 партизан нимӗҫсен ҫар поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсем ларса пыракан 6 вагон ҫӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Испанецсен дивизийӗн Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ старши капралӗ Франциско Б. ҫапла каласа панӑ: «Февраль уйӑхӗнче пирӗн дивизи пысӑк ҫухатусем тӳсрӗ. Ҫавӑнтан вара салтаксем пурте хӑраса пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем Германин вӑрҫӑри лару-тӑрӑвӗ питӗ начарланчӗ тесе шутлаҫҫӗ, ҫавӑнпа Россиӗрен хальтерех тухса кайма тӑрӑшаҫҫӗ. Нумаях пулмасть пирӗн дивизие 22-мӗш маршевӑй батальон хушӑнчӗ. Килнӗ офицерсем хӑйсене ирӗксӗр Российӑна янипе усҫӑнах тарӑхаҫҫӗ. Пӗр лейтенант Германирех эшелонран юлнӑ та таҫта сухалнӑ. Пӗр ушкӑн салтак фронта кайнӑ чухне тарнӑ. Ҫав батальонран 30 ҫынна яхӑн шанчӑксӑр тесе Испание каялла янӑ».

* * *

Бельгире патриотсем Дандр каналӗнчи шлюза тата дамбӑна сирпӗнтерсе янӑ. Ҫавӑнта пырса ҫитнӗ гестаповецсен отрядне пӑшалсемпе тата пулеметсемпе пенӗ. Шарлеруара пӗр пысӑк предприятие юрӑхсӑра кӑларнӑ. Мехельн сывӑхӗнче ирӗклӗ стрелоксем чугунҫула темиҫе тӗлте сиенленӗ.

Пирӗн авиаци Орел чугунҫул узелне тапӑнни

Июнӗн 13-мӗшӗнче кӑнтӑрла пирӗн авиаци Орел чугунҫул узелне тапӑннӑ та тӑшман эшелонӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе пула темиҫе чугунҫул составӗ ҫӗмӗрӗлнӗ, пушарсем тухнӑ тата взрывсем пулнӑ. Пирӗн 3 самолет хӑйсен базисене таврӑнман.

Нимӗҫ самолечӗсем Саратова тапӑнни

Июнӗн 13-мӗшӗ ирхи тенӗ чух ҫӗрле тата июнӗн 14-мӗшӗ ирхи тенӗ чух ҫӗрле нимӗҫ самолечӗсен ушкӑнӗ Саратов хулине тапӑнма хӑтланнӑ. Пирӗн истребительсем тата зенитнӑй артиллери тӑшман самолечӗсен пысӑк пайне сапаласа янӑ та хула ҫине кӗме паман. Тӑшманӑн хула ҫине кӗрсе кайма пултарнӑ темиҫе самолечӗ хӑйсен бомбисене тӗллӗн-паллисӗр пӑрахнӑ. Халӑх пурӑнакан суртсенче тухнӑ пушарсене часах сӳнтерсе лартнӑ. Граждӑнла халӑх хушшинче амансем пур. Тапӑнӑва сирсе янӑ чух 6 нимӗҫ самолетне персе ӳкернӗ.

Республика уйхирӗсенче

Хӗрсех ҫум ҫумлаҫҫӗ

ЭЛӖК. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те ҫурхи тырпулсене ҫумран тасатаҫҫӗ. Ку ӗҫе пионерсемпе шкул ачисем те активлӑн хутшӑнаҫҫӗ.

Юманлӑхри Буденный ячӗпе тӑракан колхоз пур культурӑсене те ӗнтӗ пӗрер хут ҫумласа тухрӗ. Халӗ кунта пахча-ҫимӗҫсене 2-мӗш хут ҫумлама тытӑнчӗҫ. Ҫум ҫумлас ӗҫре уйрӑмӑнах тулллимар вӑтам шкулта вӗренекенсем Марфа Волкова, Арсентий Сорокин, Мария Наумова пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлесе пӗтӗм колхозниксене пример кӑтартаҫҫӗ.

Вата колхозница Варвара Евграфова та тимлӗн ӗҫлет. Вӑл ҫуракине тухиччен те колхозӑн алӑпа вӑрлӑх суйласа 58 ӗҫкунӗ тунӑ пулнӑ. Ку таранччен 70 ӗҫкунӗ ытла турӗ ӗнтӗ.

«XVI-й Партсьезд» колхоз та ҫурхи тырӑсене пӗр хут ҫумласа тухрӗ. Халӗ уйра пӗр ҫумкурӑкӗ те ҫук.

«Доброволец» колхоз 280 гектар, «Комбайн» колхоз 67 гектар, «1-мӗш Май» колхоз 90 гектар ҫумланӑ.

Районӗпе илсен колхозсем 4.891 гектар тырпула ҫумран тасатнӑ.

Х. ЛИСИН.

Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерме

КАЛИНИНО. Ҫӗньялти «Правда» колхоз ирхи ҫӗртме тумалли вырӑна 3.819 лав тислӗк кӑларчӗ. Колхозниксем хӑйсен хуҫалӑхӗнче пухӑннӑ тислӗке йӑлтах колхоза пачӗҫ. Ҫакна колхоз председателӗ А. Ананьев юлташ хӑй пуҫарса ячӗ. Килес ҫул акас ыраш тата кӗрхи тулӑ пуссине ҫемҫетме вӑл хӑйӗн килӗнчен 72 лав тислӗк пачӗ. Ҫакна курса пур колхозниксем те хӑйсен хуҫалӑхӗнчи тислӗке йӑлтах хире кӑларттарчӗҫ. Колхоз счетоводӗ А. Никитин 77 лав, колхозниксем Е. Николаев, И. Денисов, М. Назарова юлташсем 80—90-шар лав тислӗк пачӗҫ. Эвакуаци йӗркипе килсе халӗ колхозра пурӑнакан А. Сакарына юлташ та хӑй килӗнчи тислӗке (пурӗ 28 лав) колхоза пачӗ.

Б. ЗАЙЦЕВ.

ВӐРЛӐХ НАЧАР ПУЛНӐ ПИРКИ

СӖНТӖРВАРРИ. Районри чылай колхозсенче пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсем акса тӑвассишӗн иртнӗ ҫул кирлӗ пек тӑрӑшмарӗҫ. Анчах «Сортсемовощь» конторинчен илсе акнӑ вӑрлӑхсем те япӑх пулчӗҫ. Колхозсем ҫав вӑрлӑхсене тӗрӗслесе пӑхмасӑрах акнӑ. Ҫавна пула халь икӗ хут ытларах ӗҫлемелле килсе тухрӗ. «Сортсемовощь» панӑ сахӑр кӑшманӗн вӑрлӑхӗ чылай колхозсенче пачах шӑтман. Уразово колхозӗнче, тӗслӗхрен, икӗ гектар ҫине акнӑ сахӑр кӑшманӗ халӗ те шӑтман. Вӑрлӑх япӑх пулни уҫҫӑнах курӑнать. Ҫавӑн пекех Анат Макаҫри колхозра та сахӑр кӑшманӗ шӑтса пухман.

П. ТИТОВ,
Райҫӗрӗҫ пайӗн заведующийӗ.

Ялсовечӗсем уборкӑна хатӗрленнӗ ҫӗрте

КӲКЕҪ, июнӗн 15-мӗшӗ. (Телефонпа). Тырпулсене пӗр тӑкаксӑр типтерлӗн пухса кӗртессин ӑнӑҫлӑхне уборка умӗнхи ӗҫсене вӑхӑтра пурнӑҫлани татса парать. Ҫакна шута илсе, пирӗн районри ялсовечӗсем калчасене ҫумкурӑкӗнчен тасатасси, ирхи ҫӗртме тӑвасси, уборка машинисене юсасси ҫине уйрӑмӑнах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ.

Ӗнерхи кун тӗлне район пурӗ 4.100 гектар ҫӗртме тунӑ. Плана тултариччен пирӗн тата тепӗр 800 гектар ҫӗртме тумалла-ха. Ку ӗҫе сывӑх кунсенчех вӗҫлетпӗр.

Райсовет депутачӗ Иванов юлташ ертсе пыракан „Молния“ колхоз ирхи ҫӗртме тӑвас плана пӗтӗмӗшпех тултарчӗ. Ҫавӑн пекех Иккасси ялсоветӗнчи „Первое Мая“ 148 гектар, „Знамя революции“ колхоз 58 гектар, Шӑмӑш ялсоветӗнчи колхозсем 210 гектар ҫӗртме туса плана пӗтӗмӗшпех тултарчӗҫ.

Районри малта пыракан колхозсем калчасене ҫумкурӑкӗсенчен пӗр хутчен тасатса тухрӗҫ. Паянхи кун тӗлне районӗпе пурӗ 3.250 гектар ҫинчи тырра ҫумкурӑкӗсенчен тасатнӑ.

Кунпа пӗрлех районри колхозсем уйхире 200 пин лав тислӗк кӑларчӗҫ. Малта пыракан колхозсем ку ӗҫе те ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ. „Знамя революции“, „Певое Мая“, „11 лет Чувашии“ тата „Чӑваш Коммуни“ колхозсем ҫуллахи вӑхӑтра уя тислӗк кӑлармалли плана ирттерсе тултарчӗҫ. „Первое Мая“ колхоз пурӗ 7.200 лав, „11 лет Чувашии“ колхоз 3.600 лав, „Чӑваш Коммуни“ колхоз 3000 лав ытла тислӗк тӑкнӑ.

Уборка машинисене юсас ӗҫ те хӗрӳллӗн пырать. Июнӗн 14-мӗшӗ тӗлне районӗпе 123 жнейкӑран 87-шне юсаса пӗтернӗ. 68 косилкӑран 56-шне юсанӑ, хӑшпӗрне тырӑ вырмалла туса майлаштарса лартнӑ.

Кӑҫал районри колхозсенче тырӑ вырас ӗҫре кӗреплеллӗ ҫавасемпе анлӑн усӑ курма шутлаҫҫӗ. Ҫавна май паянхи кун тӗлне 525 кӗреплеллӗ ҫава юсаса хатӗрленӗ е ҫӗнӗрен тунӑ. „Первое Мая“, „КИМ“, Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем ку ӗҫе уйрӑмах лайӑх тӑваҫҫӗ.

Районри 8 колхоз мӗнпур уборка машинисене юсаса пӗтернӗ. Молотов ячӗпе тӑракан колхоз 3 жнейка юсанӑ, 6 косилкӑна тырӑ вырмалла туса майлаштарнӑ, 4 молотилка хатӗрленӗ. Сортировкӑсемпе триерсене те пӗтӗмӗшпех юсаса лартнӑ.

Районри ытти колхозсенче те косилкӑсене тырӑ вырма майлаштараҫҫӗ.

ВКП(б) Обкомӗн ҫак кунсенче пулса иртнӗ XV-мӗш пленумӗн решенийӗсене пурнӑҫлассишӗн эпир вӑйлӑ кӗрешӳ пуҫартӑмӑр. Уборкӑна лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илессишӗн кӗрешӳ хӗрсех пырать.

С. МИРОНОВ.
Райсовет исполкомӗн председателӗ.

Паха вӑрлӑх ӳстерессишӗн кӗрешеҫҫӗ

СӖМӖРЛЕ. (Хамӑр корр.). Вӑрман хӗрринчен пуҫласа ыраш уйӗ сиплимӗсӗн сарӑлса выртать. Илемлӗн курӑнать вӑл. Тип-тикӗс калча тинӗс пек хумханса ларать. Ку вӑл Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозӑн вӑрлӑхлӑх туса илме акнӑ ыраш участокӗ. Инҫех мар кӗрхи тулӑ тата сурхи тырӑсем акнӑ вӑрлӑх участокӗсем. Вӗсем те тип-тикӗс ӳсеҫҫӗ, тырӑ ҫинче кунта та ҫумкурӑксем пачах курӑнмаҫҫӗ.

Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз тырпула тухӑҫлӑн туса илнипе пӗлтӗр районра пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗ. Кӑҫал та кунти колхозниксем гектартан вӑтам шутпа 120 пӑт тырӑ ӳстерсе илессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Вӑрлӑх участокӗсенче ҫеҫ мар, ытти уйсенче те вӗсен тырӑсем кӑҫал вӑйлӑ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксем кӑҫал та хӑйсене ӗҫре тивӗҫлипех кӑтартрӗҫ. Кашни кунах паянхи пек тимлӗн ӗҫлесен, вӗсен гектартан 120 пӑт тырӑ пулатех.

Колхозниксем вӑрлӑх участокӗсене уйрӑмах тимлӗн пӑхса тӑраҫҫӗ. Колхозӑн вӗсем сахал мар: вӑрлӑхлӑх кӑҫал 5 гектар ытла ҫурхи тулӑ, сичӗ гектар сурӑ пӑрса акнӑ тата иртнӗ ҫул ятарласа акнӑ 10 гектар ыраш, 5 гектар кӗрхи тулӑ ешӗрсе ӳсеҫҫӗ.

Вӑрлӑх участокӗсене акаччен лайӑх ҫемҫетсе сухаларӗҫ, таса та шултӑра вӑрлӑха яровизацилесе акнӑ, шӑтса тухсанах удобрени хурса татах ҫемҫетнӗ.

Халӗ колхозниксем тырӑсем ӳсекен пӗтӗм ҫӗр лаптӑкне пӗрремӗш хут ҫумласа тухрӗҫ. Ҫум ҫумлас ӗҫре кашни кунах 40—50 ҫын ӗҫлерӗҫ. Вата колхозниксем, ҫамрӑк ачасем пурте ӗҫре пулчӗҫ.

КОММУНИСТКА ЕРТСЕ ПЫРАКАН КОЛХОЗРА

КАЛИНИНО. (Хамӑр корр.). Руководитель ӗҫе йӗркеллӗн, тӑрӑшса туса пыни колхозниксене икӗ хут, виҫӗ хут хастарлӑрах ӗҫлеме пулӑшать. Уйкас-Юнтапари «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхоз председателӗ — коммунистка Угинева юлташ колхозӑн вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ӗҫӗсене колхозниксене лайӑх ӑнлантарса парать. Ӗҫ вӑйне куллен тӗрӗс вырнаҫтарса тухать, бригадирсен ӗҫӗсене куллен тӗрӗслет.

«Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхоз халь, ирхи ҫӗртмене ӑнӑҫлӑн туса пынӑ вӑхӑтрах, тырпулсене пухса кӗртес ӗҫе те тӗплӗн хатӗрленет. Ҫак ответлӑ ӗҫе колхоз мӗнле туса ирттерессине кашни колхозниках пӗлет, малашнехи ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗшӗн халех тӑрӑшать.

Угинева юлташ — нумаях пулмасть колхозри платник ӗҫӗсене тума пултаракан колхозниксемпе калаҫса илчӗ, вӗсем мӗн тумаллине каласа пачӗ. Вӑхӑт нумай та иртмерӗ, ӗҫӗн результачӗ куҫ умӗнче: косилкӑсем, жнейкӑсем ӗҫе тухма хатӗр. Утӑ ҫулма кӑҫал ҫӗнӗ ҫынсем тухмалла. Ҫавасем ҫивӗч пулни кирлӗ. Угинева юлташ ҫавасене туптама П. Иванов колхознике хушнӑ. П. Иванов кӗске вӑхӑтра 78 ҫава туптаса пачӗ, утӑ ҫулма кӑҫал 100 яхӑн ҫын тухать. Кашни ҫын валлиех лапатка илсе хунӑ.

Утӑ ҫулма паян-ыранах тухмалла пулать. Юлнӑ вӑхӑтпа туллин усӑ курса, колхозниксем тырӑсем ҫинчен ҫумкурӑкӗсене ҫумласа пӗтерме тӑрӑшаҫҫӗ.

С. Ш.

Ҫулсене юсамалли уйӑхлӑх

Ҫулйӗр ӗҫӗ ҫаплах вӑрахӑн пырать

Паян вунултӑмӗш кун ӗнтӗ республикӑра ҫулйӗр уйӑхлӑхӗ пырать. Анчах та уйӑхлӑхӑн кунӗсенче нимӗнле палӑрмалла ӗҫсем те курӑнмаҫҫӗ-ха. Паянхи куна республика уйӑхлӑхӑн планне 30 процента яхӑн ҫеҫ пурнӑҫланӑ. Уйрӑмӑнах ҫулйӗр ӗҫӗнче Канаш, Элӗк, Ишлей, Хӗрлӗ Чутай районӗсем юлса пыраҫҫӗ. Элӗк районӗн планпа ҫулйӗр ӗҫне 416 ҫын, 128 лаша ямалла пулсан, 38 ҫын, 3 лаша кӑна янӑ. Ҫавӑн пекех Элӗк районӗнче те 20 лаша вырӑнне 3 лаша ҫеҫ ӗҫлет.

Ҫулйӗр уйӑхлӑхӗн шутлӑ кунӗсем ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ. Ҫак юлнӑ вӑхӑтра кашни районӑн ҫулйӗр уйӑхлӑхӗн графикне пурнӑҫлассишӗн кӗрешмелле. ВКП(б) райком секретарӗсен ку ӗҫе райсовет исполкомӗн заместителӗсем ҫине ҫеҫ тӳнтермелле мар. Ҫулйӗр уйӑхлӑхне ертсе пырас ӗҫе хӑйсем ҫине илмелле.

Ялсовет исполкомӗсемпе колхоз председателӗсен колхозниксене ҫак ӗҫе массӑллӑн кӑлармалла. Уйра тӗрӳллӗ ӗҫсем пуҫланиччен ҫулйӗр ӗҫне кӑтартуллӑн вӗҫлессишӗн тӑрӑшмалла.

Учительсем ял хушшинче ӗҫлеҫҫӗ

Патӑръелӗнчи (Ҫӗрпӳ р.) тулллимар вӑтам шкулта вӗрентекен учительсем ял хушшинче агитацие пропаганда ӗҫне яланах кирлӗ пек туса пыраҫҫӗ.

Пурнинчен ытла шкул директорӗ, фронтран аманса килнӗ А. Садиков ку ӗҫре тимлӗн ӗҫлет. Вӑл колхозниксемпе колхозра тӑман хресченсем хушшинче темиҫе калаҫу та ирттернӗ.

Кунсӑр пуҫне, хӗл каҫиччен учительсем ачасен вӑйӗпе 6 постановка лартса панӑ. Постановка умӗн яланах докладсем туса панӑ. Халӗ вӗренӳ ҫулӗ вӗҫленнӗ пулин те, вӗсем канса лармa шутламаҫҫӗ. «Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленме пуҫлӑпӑр май, шкул валли пурте вӑрмана вутӑ касма каятпӑр, унтан кашниех колхоз ӗҫӗнче пулатпӑр, агитацие пропаганда ӗҫне вӑйлӑрах туса пыма шутлатпӑр», — тет шкул директорӗ.

Ив. М.

Зоотехникӑпа ветеринари работникӗсен республикӑри канашлӑвӗ хупӑнчӗ

Зоотехникӑпа ветеринари работникӗсен республикӑри канашлӑвӗнче ӗнер Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Малов юлташ тунӑ доклад тӑрӑх пренисем пычӗҫ.

Пренире чи малтанах ветеринарипе бактериологи станцийӗн директорӗ Кротов, Вӑрмар райҫӗрӗҫ пайӗн старши зоотехникӗ Григорьева юлташсем тухса каларӗҫ. Унтан тысӑн парти Обкомӗн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен секретарӗ Мартынов юлташ тухса каларӗ.

— Эпир пӗлтӗр выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе тата ялхуҫалӑхӗнче начар мар ӗҫлерӗмӗр. Анчах та иртнӗ ҫулхи ҫитӗнӳсемпе пирӗн лӑпланса лармалла мар, тата пысӑкрах ӳсӗмсем тумалла. Кунта тухса калакан юлташсем нумайӗшӗ ҫав ҫитӗнӳсем ҫинчен каларӗҫ, ҫитменлӗхсем ҫинчен сахал каларӗҫ, — тет Мартынов юлташ. Вӑл уйрӑмӑнах Краснов юлташа (Ишлей райҫӗрӗҫ пайӗн старши зоотехникӗ) критиклерӗ.

Краснов юлташ питӗ аван тухса каларӗ, анчах выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси ҫинчен партипе правительство кӑларнӑ постановленисене Ишлей районӗнче пур колхозниксем патне те ҫитереймен-ха. Ҫамрӑк выльӑхсене пӑхса ӳстерессн кирлӗ пек пулса пыраймасть. Пирӗн республика Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ пулсан, пирӗн ӑна ҫирӗппӗн тытса тӑрассишӗн кӗрешмелле, — терӗ Мартынов юлташ.

Унтан хыҫҫӑн Потапова (Сӗнтӗр райҫӗрӗҫ пайӗн старши зоотехникӗ), Кривнлев (Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарнчӗн ветеринари управленийӗн начальникӗ), пыл хурчӗсене ӗрчетес ӗҫпе ӗҫлекенсӗн конторин управляющийӗ Запольский, пионерка Зверева, Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарначӗн главнӑй агрономӗ Беляев, Миронов (Улатӑр райҫӗрӗҫ пайӗн ветврачӗ), ялхуҫалӑх институчӗн доценчӗ Бережная, Соловьев («Красное Сормово» колхозри ӗне фермин пуҫлӑхӗ), Кузьминская (Ҫӗрпӳри опытнӑй станцин научнӑй работникӗ), Васильев (Маслопром управляющийӗ), Чӑваш АССР Совнаркомӗн председатель заместителӗ Герасимович юлташсем тухса каларӗҫ. Канашлу делегачӗсем пысӑк хавхаланупа Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ патне саламлӑ ҫыру яма йышӑнчӗҫ.

Унтан выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре 1942 ҫулта тунӑ ҫитӗнӳсемшӗн ҫӗрӗҫ органӗсен работникӗсемпе специалистсене премилесси ҫинчен Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗн Малов юлташӑн приказне вуласа пачӗҫ.

Канашлура ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ Чарыков, Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗ Матвеев тата ЦК ВКП(б) ҫумӗнчи Парти Контроль Комиссин Чӑваш республикинчи уполномоченнӑйӗ Серов юлташсем пулчӗҫ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Çуракинче лайăх ĕçленĕ çамрăксене— комсомол ретне

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ. («Чăваш Коммуни корр.). Малта пыракан çамрăксене Ленинпа-Сталинпа комсомол ретне явăçтарас тĕлĕшпе машинно-тракторнăй станцинчи пуçламĕш организаци тăрăшса ĕçлет. Кунта кăçал комсомола 25 çамрăка илнĕ. Вĕсен шутĕнче трактористсем чылай. Вĕсем пурте тенĕ пекех çуракинче хăйсен ĕçĕн пахалăхĕсене кăтартрĕç. Трактористка Дарья Илюшкина сменăра 5,4 гектар сухалас вырăнне 8—9-шар гектар сухаласа пычĕ. Трактористсем Яков Деведеров, Фекла Чумурлайкина т. ыт. те нормăсене 130-шар процент тултаратчĕç.

Комсомолăн «Пятилетка» колхозри пуçламĕш организаци те кăçал 9 çамрăка хăй ретне явăçтарнă. «Свет» колхозри организаци (секретарĕ Блинова юлташ) хăйĕн ретне 2 хут ÿстерчĕ, халĕ унта 15 комсомолец, вĕсем пурте колхоз производствине активлăн хутшăнаççĕ.

Юлашки вăхăтра Штанаш вăтам шкулĕнчи организаци те палăрмаллах ÿсрĕ. 5 уйăх хушшинче кунта 21 вĕренекене комсомола илнĕ, халĕ тата 5 заявлени пур. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах комитет секретарĕ учительница Алякина юлташ тăрăшса ĕçлет.

Анчах нумай организацисем çамрăксене комсомол ретне явăçтарас тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ-ха. Уйрăм организацисем 5—6 уйăх хушшинче те пĕр çынна та комсомола явăçтарман. Самахран, Калинин ячĕпе тăракан, «Профинтерн», «Красные Четаи» колхозсенчи организацисем ку çулта пачах ÿсмен. Мĕншĕн тесен вĕсен секретарĕсем союзра тăман çамрăксем хушшинче нимĕн те тумаççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозра çамрăксем сахал мар, анчах кунти пуçламĕш организацин секретарĕ Судаков вĕсемпе ĕçлемест. Кăçал вăл союзра тăман çамрăксемпе мар, комсомолецсемпе те пĕр хутчен те пуху туса ирттермен. Ытти комсомолецсем те нимĕн те тумаççĕ. Халĕ колхозра хĕрсех ĕç пырать, колхозниксем çĕрпе кусмалан пулса иртекен хыпарсене пĕлесшĕн, анчах вĕсене никам та каласа памасть.

«Красные Четаи» колхозри пуçламĕш организаци секретарĕ Магуськина юлташ çамрăк колхозниксене комсомола явăçтарас ыйтупа кăçал пĕр пуху та, калаçу та ирттермен. Ахальтен мар колхозри çамрăксем «пирĕнпе никам та ĕçлемест» теççĕ.

Комсомол райкомĕн (секретарĕ Кириллов юлташ) уйрăм организацисенче комсомола илес ĕç мĕншĕн япăх пынипе ытларах интересленмелле, анчах вăл ăна маннă. Çулталăк асăннă виçĕ колхозри пуçламĕш организацисем çинчен райкомол 5 уйăх хушшинче пĕрре те сÿтсе явман. Çавăнпа райкомол работникĕсем çав колхозсенче комсомол организацийĕсен ĕçĕ ÿсменнин тĕп сăлтавне пĕлмеççĕ.

Малта пыракан çамрăксене комсомола явăçтарасси — кашни комсомол организацин тĕп задачи пулса тăрать. ВЛКСМ Чутай райкомĕн ку енĕпе хăйĕн ĕçне лайăхлатмалла.

Х. ЛИСИН.

Ĕç дисциплини çирĕпленет

КАНАШ. (Хамăр корр.). Вагонсем юсакан заводра чугунçулсем çинче сарти пек çирĕп дисциплина тăвасси çинчен кăларнă Указа кашни рабочине тĕплĕн ăнлантарса панă. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Ямпольский, Жебрак, Березенцев агитаторсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем рабочисене Указпа тĕплĕн паллаштараççĕ, ĕçри дисциплинăна çирĕплетесси çинчен калаçусем туса ирттереççĕ.

Массăллă-ăнлантару ĕçне йĕркеллĕн туса пынине пула Жебрак юлташ начальник пулса тăракан цех коллективĕн ĕçĕсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Цех продукци кăлармалли графика кунран-кун ирттерсе пултарать. Петренко мастерăн участокĕ хăйĕн сменинчи задание яланах 180—200 процент пурнăçласа пырать. Çак участокри Тюкильмин, Ланцберг, Черны Орловский стахановецсем хăйсен сменисенчи нормăсене 400-шер процент тултарса пыраççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Икĕ-виçĕ çыншăн ĕçлеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Çĕвĕçсен Ворошилов ячĕпе тăракан артелĕнче кашни çĕвĕç икĕ-виçĕ çын ĕçлес ĕçе пĕччен ĕлкĕрсе пырать. Артельре 21 çын ĕçлемелле пулсан, паянхи куна 9 çын ĕçлет. Вĕсем пур заказсене те вăхăтра пурнăçлаççĕ. Артельри работницăсем Ф. Григорьевăпа Васильева юлташсем кашни кунхи задание 200 процент ытла тултарса ĕçлеççĕ. Ф. Михайлова юлташ та панă задание 150—160 процента çити пурнăçлать.

Стахановкăсем çамрăксене çĕвĕ ĕçне вĕрентеççĕ. Закройщица Васильева юлташ 3 хĕрачана çĕвĕ ĕçне вĕрентсе çитерчĕ. Вăл вĕрентнĕ П. Петрова, М. Егорова çамрăк работницăсем ĕçре паха примерсем кăтартаççĕ.

Артель коллективĕ çурçулхи плана июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне пурнăçлать.

С. ШАДИН.

Кросăн лайăх результачĕсем

Профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне Элĕк районĕнче 4.192 çын хутшăннă. Вĕсенчен БГТО нормине 3,013 çын, ГТО нормине 1.415 çын тата ГТО-н 2-мĕш сыпăкри нормине 34 çын панă. Пĕтĕмпеле 4,162 çын нормăсем панă, вĕсенчен комсомолецсем 428 çын.

Кросра уйрăмăнах Элĕкри вăтам шкулта вĕренекенсем тата «Динамо» спорт обществин членĕсем лайăх результатсем кăтартнă.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. **Укерчĕк çинче:** пирĕн земляк — оруди наводчикĕ Н. Я. Андреев. Вăл тăшманăн 3 орудине, 3 станковăй пулеметне, 2 миномечне тата 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕç захватчикĕсемпе ăнăçлăн çапăçнăшăн Андреев юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă.

Х. ЗИНГЕРМАН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Вутă хатĕрлес плана пурнăçлассишĕн

Кăçал çуллахи уйăхсенче вырăнти предприятисем, учрежденисем, больницăсем тата ытти учрежденисем валли республикăра 724,2 пин кубометр вутă хатĕрлемелле. Çав плана пурнăçлас тĕлĕшпе кашни районăн вутă хатĕрлемелли пĕтĕм планран июнь уйăхĕнче 30 процентран кая мар пурнăçламалла.

Анчах та республикăри районсенче çак ĕç начар пулса пырать-ха. Уйрăмăнах ку ĕçре Кÿкеç, Йĕпреç, Пăрачкав, Шăхасан районĕсем юлса пыраççĕ. Вĕсем паянхи куна çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлемелли плана 4—5 процент кăна пурнăçланă.

Çав районсенче ĕçсыннисене, предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисене вăрман ĕçне мобилизацилемен. Калини рабочипе служащи тата вăрман ĕçлеме тухакан ытти çынсен сезонра 100 кубометр вутă хатĕрлемелле пулсан, паянхи куна хатĕрлеме те тытăнман. Паллах, çакăн пек вăрахăн ĕçлесессĕн çуллахи сезон планне пурнăçлама çук.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен, вăрман ĕçĕнче ĕçлекен работниксен çак ответлă ĕçе оперативно ертсе пымалла, юлнă вăхăтна туллин усă курса, вутă хатĕрлемелли плана пурнăçламалла.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод 1-мĕш кварталта тимĕр-тăмăрсенчен тĕрлĕ детальсем туса хатĕрлес задание тата тимĕр-тăмăра пухса кирлĕ çĕре ăсатас плана çурри çеç пурнăçланăччĕ. Иккĕмĕш кварталта завод коллективĕ ку ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхрĕ. Июнĕн 7-мĕшĕ тĕлне çур çулти плана пурнăçласа планран ирттерсе 14 вагон тимĕр-тăмăр ăсатрĕ. Тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе хулари ВЛКСМ комитечĕ çамрăксен воскресникĕсем туса ирттерчĕ. Воскреснике хулари 29-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекен ачасем активлăн хутшăнчĕç. Ку ĕçе вĕсене шкулти старши пионервожатăй Присадько юлташ ертсе пычĕ. Çавăн пекех заводра ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксем те, воскреснике хутшăнса, темиçешер тонна тимĕр тăмăр пухрĕç.

Орденлă республика ятне ямастпăр

АМУР ОБЛАÇĔ. Орденлă Чăваш республикинчен килнĕ çамрăксем хăшĕсем халĕ шахтер пулса ĕçлеççĕ. Çĕмĕрле районĕнчен килнĕ П. Немцев, М. Халиков юлташсем задание кашни кунах 187 процента çити тултарса ĕçлеççĕ. Калинино районĕнчен килнĕ Петров юлташ кунта электромонтер ĕçне вĕренсе çав ĕçе тĕплĕн туса пырать. Вĕсене виççĕшне те производство программине кашни уйăхрах ирттерсе тултарнăшăн темиçе хутчен те хаклă япаласемпе премиленĕ.

— Эпир орденлă республика ятне ямастпăр, мĕнпур вăя ĕçе хуратпăр, пирĕн атте-аннесем, тăвансем пирĕншĕн савăнччăр,—теççĕ вĕсем.

А. НИКОЛАЕВ,
Шахтăри культработник.

Колхозсенчи армансене ĕçе ямалла

ПАТĂРЬЕЛ. «Ленин çулĕпе» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсен иртнĕ çулта шыв арманĕсем йĕркеллĕн ĕçлесе тăчĕç. Халĕ икĕ колхозĕн те шыв арманĕсем ĕçлемеççĕ. Çавăн пекех ытти колхозсенчи çил арманĕсем те юсавлă мар. Çак ыйтупа райсовет исполкомĕ те, ялсоветсем те интересленмеççĕ.

В. КОМИССАРОВ.

Пĕрлешÿллĕ нацисен кунĕ

Июнĕн 14-мĕшĕнче, пĕрлешÿллĕ нацисен кунĕнче, Великобритание, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене тата ытти пĕрлешÿллĕ нацисене — 1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Вашингтонра йышăннă декларацин участникĕсене — хисеплесе пĕтĕм совет çĕршывĕнче государство учрежденийĕсен çурчĕсем çине СССР государство флагне кăларса çакнă.

Мускавра, Ленинградра, Хабаровскра, Свердловскра, Горькинче, Куйбышевра, Архангельскра, Тбилисире, Ереваньре, Ташкентра, Алма-Атара, Сталинабадра тата ытти хуласенче те, фабрикăсемпе заводсенче, учрежденисенче тата учебнăй заведенисенче пĕрлешÿллĕ нацисем хăйсен пĕрлехи тăшманĕпе — гитлерла Германипе тата ăна пулăшакансемпе вăрçни çинчен, демократиллĕ çĕршывсен вăрçăри пĕрлĕхĕ çирĕпленсе пыни çинчен калаçусемпе докладсем пулса иртнĕ. Сталинградра Атăл çинче аслă хулана юсакан строительсен йышлă пухăвĕ пулса иртнĕ.

Мускавра пысăк радиоконцерт панă. Гитлеризмпа çапăçас ĕçе хутшăннă халăхсен музыкăллă произведенийĕсене юрласа, каласа кăтартнă.

Свердловскра, Архангельскра, Сталинабадра тата ытти хуласенче те пĕрлешÿллĕ нацисем гитлеризма хирĕç кĕрешнĕ ятпа выставкăсем уçăлнă.

Мускаври тата тăван çĕршывăн ытти нумай хулисенчи кинотеатрсенче акăлчансен документлă фильмне тата кинохроникине кăтартнă. Ку картинăсене халăх пит хавассăн пăхнă. Вĕсем куракансене пирĕн союзниксен тинĕсрипе сывлăшри флочĕн тата çĕр çинчи çарĕсен уйрăм çапăçăвĕсемпе паллаштарнă. (ТАСС)

Ют çĕршывсенче

Пĕрлешÿллĕ нацисен кунне уявлани

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Паян пĕрлешÿллĕ нацисен кунне уявланă май, Лондонра парад пулнă. Парадра Англи, Канада, Австрали, Çĕнĕ Зеланди тата Кăнтăр Африка çарĕсем пулнă, парада моряксем, рабочисемпе работницăсем, госпитальсенче ĕçлекенсем тата ыттисем те хутшăннă. Йышлă халăх умĕнче малта оркестр пынă тата пĕрлешÿллĕ халăхсен флагĕсене çÿле çĕклесе знаменосецсем пынă.

Каирта, Александрире, Бейрутра, Сывăхри Хĕвелтухăçĕн, Австралин тата Индин ытти хулисенче те нумайĕшинче парадсем пулса иртнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче паян пур хуласенче те пĕрлешÿллĕ нацисен кунĕпе флаг кунне уявланă. США-н чи пысăк хулисенче пĕрлешÿллĕ нацисен кунĕ ячĕпе парадсем тата патриотла церемонисем пулса иртнĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер кăнтăрла американецсен йывăр бомбардировщикĕсем Джербинири тата Катанири аэродромсене (Сицили утравĕ) пыра-пыра çапнă. Тапăнăва пула пушарсем тухнă тата взрывсем пулнă. Июнĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Катанири аэродрома Англи авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсем атакăланă. Бомбăсем тĕл ÿкнипе пушарсем пит нумай тухнă.

Июнĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата ĕнер кăнтăрла Англин истребителĕсемпе инçене вĕçекен вăтам бомбардировщикĕсем тăшманăн Эгей тинĕсĕнче, Греци çыранĕсем патĕнче, пĕр çĕре пуçтарăнса тăнă судносене тапăннă.

Июнĕн 13-мĕшĕнче кăçхине Англи авиацийĕ тăшманăн Голланди çыранĕсем хĕррипе пынă суднисен караванне атакăланă.

СОЮЗНИКСЕМ ИТАЛЬЯНЕЦСЕН ЛАМПИОНЕ УТРАВНЕ ЙЫШĂНСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксем итальянецсен Лампионе утравне йышăнса илнĕ. (Лампионе утравĕ Сицили проливĕнче, Лампедуза утравĕнчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре).

Германин промышленность центрĕсене аркатни çинчен

АНГЛИН ЭКОНОМИКĂЛЛĂ ВĂРÇĂ МИНИСТРĔ ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин экономикăллă вăрçă министрĕ лорд Селборн Лондонра сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Пирĕн алăри даннăйсем тăрăх, Германин промышленность производстви пĕлтĕрхипе танлаштарсан пĕр 15—20 процент каялла чакнă. Лорд Селборн сăмахĕсем тăрăх, çав каялла чакнине кăтартакан цифрăсенчен сахалтан та 50 процентĕ союзниксен авиацийĕ çĕмĕрнипе пулнă ĕç. Çакăн пек шухăшлама тÿрĕ килет: Рур облаçĕн промышленность производстви пĕлтĕрхи çак вăхăтри уйăхсемпе танлаштарсан, пĕр 35 процент чакнă. Германин ытти промышленноçĕ пĕр 10 процента яхăн чакнă.

«Рур облаçне тапăнасси малашне те, нимĕçсем çав районра промышленность ĕçлеме пултарайманнине ăнланса иличченех, халыхи пекех вăйлăн пулса пырассине эпĕ шанса тăратăп,—тенĕ лорд Селборн.—Рур облаçĕнчи промышленноçа аркатса тăкасси çăмăл ĕç мар, мĕншĕн тесен унта питех те вăйлă оборона. Анчах та унти промышленноçа эпир ишĕлтеретпĕр. Рур çинчен, никам та мар, нимĕçсем хăйсемех нумаях та пулмасть çапла калаçатчĕç: пĕтĕм Германин кунçулĕ Рур кунçулĕнчен килет, тетчĕç». (ТАСС).

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔСЕМ АНГЛИЕ ТАПĂННИ

Июнĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германи самолечĕсем Англин кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи çыранĕсен хăшпĕр пункчĕсенче тата Аслă Лондон районĕнче бомбăсем пăрахнă. Материаллă сиен кÿнĕ, темиçе çын вилнĕ. (ТАСС).

КЭННИНГХЕМ АДМИРАЛ АНКАРАНА ПЫНĂ

АНКАРА, июнĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Анкарана Англин Вăтаçĕр тинĕсĕн (хĕвелтухăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Кэннингхем адмирал çитнĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кэннингхем адмирал турецксен главнокомандующийĕпе Чакмак маршалпа, премьер-министрпа Сараджоглупа, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Менеменжиоглупа тата тинĕс-çар вăйĕсен штабĕн представителĕсемпе курнăçса калаçать.

Японипе Китай вăрçи

Китай командованийĕн даннăйĕсем тăрăх, Китай çарĕсем Ичанпа Шаши хушшинче Янцзы шывĕн кăнтăр хĕрринче ларакан Сунцзина (Хубэй провинцинче) пĕтĕмĕшпех йышăнса илнĕ. Унсăр пуçне тата Китай çарĕсем çав районсенче çĕнĕрен стратегиллĕ темиçе пункта йышăнса илнĕ. Коммюникере тата Япони çарĕсем Хубэй провинцин кăнтăр пайĕнче те каялла чакнă çинчен каланă. Хубэй провинцин хĕвелтухăçĕнчи пайĕнче Китай çарĕсем халăх пурăнакан икĕ пункта йышăнса илнĕ. (ТАСС).

Пĕлтерÿ

Июнĕн 17-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Крупская ячĕпе тăракан паркра лекци пулать. Лекци теми:

«Совет Союзĕн тĕнчери лару-тăрăвĕ».

Лекцие ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ Шапиро юлташ вулать.

Билетсене паркăн кассинче сутаççĕ.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Пирĕн землянсем

Тăваң çĕршĕн

Вăл мирле совет çĕре çинче агроном пулса ĕçлеме хатĕрленнĕ. Чăваш çамрăкĕ умĕнче ăслăлăх çулĕ яр уçă выртнă—тăрăш, вĕрен, пысăк çын пул!

Ача чухне вăл хăйĕн тăван ялĕнчи çынсем çĕр пирки ÿпкелешнине сахал мар илтнĕ. Анчах ялта колхоз пуçланнăранпа çав çĕр, çĕнĕ хăват илсе, хресчене паха çимĕçсем пама пуçланă. Иван Данилов агротехникăн пархатарлă вăйне туйса илнĕ. Çав ăслăлăха унăн хăйĕн вĕренсе алла илес килнĕ. Ялхуçалăх рабфакĕнчен вĕренсе тухсан, вăл Чăвашсен ялхуçалăх институтне кĕнĕ. Аслă шкул ăна пирĕн авалхи аслă çĕре çĕнетмелли майсене, çутçанталăкăн чее вăрттăнлăхĕсене уçса панă. Çамрăк агрономăн куçĕ умĕнче—çăра та тулăх тырпул тинĕс пек хумханса выртнă. Çута ĕмĕт малалла чĕннĕ.

Анчах эпир юнпа тар юхтарса пухнă пуянлăх хамăрăн тăван çĕршыв тулашĕнчи тискер кайăксене канăç паман. Вĕсем çав пуянлăха тытса илме хапсăннă. Тăван çĕршыва сыхламалла! Колхозникĕн мирлĕ ĕçне вăйпитти çамрăксем хÿтĕлеме тивĕçлĕ.

1937 çулхи черетлĕ призывра Хĕрлĕ Çар ретне кайнă чухне Иван Данилов тăван ашшĕне:

— колхозра тăрăшса ĕçле, атте. Хăвах пĕлетĕн, çĕр вăл тарпа шăварнине юрататъ,—тесе каласа хăварнă. Хăй вара тăван колхозĕн лăпкă пурнăçне тĕплĕн хÿтĕлеме пулнă. Именекенскер, вăл çак юлашки самахсене илтĕнмелле каламан, анчах вĕсене вăл чĕрере тытнă. Çакă вăл коммунист тăван çĕршыв умĕнче малтанхи хут тупа туни пулнă.

Ялхуçалăхĕнче Данилов трактора юратнă, вăрçă ĕçĕнче—танка хисепленĕ. Танкпа трактор уншăн пĕр тăвансем пулнă. Танк çине вăл темĕнле хăватлă чĕрчун çине пăхнă пек пăхнă. Мотор кĕрленине чĕре таппине итленĕ пек итленĕ

Иван Данилов танковăй училищĕрен вĕренсе тухнă çĕре Çурçĕрте

вăрçă пуçланнă. Практика вырăнне унăн çапăçу хирне тухма лекнĕ. Çав практика вара кайран, 1941 çулхи июнĕн лăпкă ирĕнче пирĕн Çĕршыв çине броньăланă тискер кайăксем тапăнса кĕрсен, ăна питех те кирлĕ пулчĕ.

Старши лейтенант Иван Данилов хăватлă совет танкĕсен подразделенине вăрçăн малтанхи кунĕнчех çапăçăва ертсе кĕнĕ.

— Тăван çĕршĕн!—тенĕ вăл юлташĕсене хавхалантарса.

Кĕтмен çĕртен, ултавлăн тапăннă ирсĕр тăшман пирĕн хуласене аркатса, ялсене çунтарса малаллах хирĕннĕ. Сĕрĕшсе пулнă тырпул, чи çывăх туссем пек пĕр-пĕрин çине тайăнса ларакан сулмаклă пучахсем нимĕç танкĕсен ураписем айĕнче таптаннă. Пирĕн аслă çĕр ун çине нимĕç снарячĕсем ÿке-ÿке çурăлнипе таткаланса суранланнă. Хура тăпра айĕнчен татăлса сирпĕнекен хĕрлĕ тăм çĕрĕн çăра юнĕ пек куранннă. Тăван çĕрĕн асапĕ Данилов чĕрине ыраттарнă. Унăн кăкăрĕнче хаярлăх вĕресе çĕкленнĕ.

— Çак мăшкăла тÿсмешкĕн марçке-ха эпир сана, аслă çĕрĕмĕр, ĕçлесе çемçетнĕ!—тенĕ Данилов шăла çыртса. Вăл хăйĕн хăватлă танкне тăшмансем çăрарах çĕре кĕрте-кĕрте янă. Танк урапи айĕнче ирсĕр нимĕçсен шăммисем çатăртатнă, аяккалла фашистсен хура юнĕпе пырши-пакартисем сирпĕннĕ.

Çапла 1941 çулхи кĕркунне хамăрăн тăван çĕршыв чĕрине—Мускава хÿтĕлесе хăварнă çĕре чăваш ачи те хăйĕн улăпла вăйне панă. «Мускавшăн!»—çапла пулчĕ вăл çулхи çапăçура хавхалантарса пыракан çулăмлă сăмах.

1942 çулта нимĕçсем Мускава инçетрен кайса çавăрса илме хапсăнчĕç. Кăнтăрта хаяр çапăçусем пуçланса кайрĕç. Фронтăн пĕр ансăр участокне нимĕçсем, йышлă пехотăпа артиллерисĕр пуçне, танксен икĕ дивизине пухса тăратнă пулнă. Сывлăшран çав вăйсене фашистсен 400 ытла самолечĕ пулăшса тăнă.

Çапăçу кунĕн-çĕрĕн пĕр чарăнма пĕлмесĕр кĕрленĕ. Пирĕн боецсем тăшманăн броньăланă тискер кайăкĕсене тупăсемпе танксене хирĕç кĕрешмелли пăшалсенчен пере-пере аркатнă, çунакан шĕвек сапса çунтара-çунтара янă, пуç тăрринчех явăнса çÿрекен фашистсен çăханĕсене пере-пере антарнă. Çакăнта, хамăрăн боецсене пулăшма, Данилов юлташ тăракан танковăй часть та пырса çитнĕ.

Акă мĕн çырнă пĕр çапăçу çинчен „Красная Звезда" хаçатăн пĕлтĕрхи июнĕн 25-мĕшĕнче тухнă номерĕнче:

Тăшман пĕр вырăнах тата çинеçинех çав тери пысăк вăйсемпе килекиле çапнă. Çавăнпа та вăл хăшпĕр вырăнсенче пирĕн чăссем вырнаçса тăракан çĕре савăлланса кĕме пултарнă. Нимĕçсем хăйсен ăнăçăвне малалла ÿстерме хăтланнă, çĕнĕренçĕнĕ вăйсем иле-иле пынă. Анчах вĕсене кунта çитсе ĕлкĕрнĕ пирĕн танкистсем кĕтсе илчĕç. Лару-тăру сасартăках улшăнчĕ. Танксен çапăçăвĕ пуçланса кайрĕ.

Тăшман танкĕсем малалла кĕрсе кайнине пула, кунта нимĕçсен артиллерийĕ çитсе ĕлкĕреймен пулнă. Анчах вĕсен авиацийĕ танксемпе пĕрле пынă. Нимĕç авиацин ĕçне чăрмантарас тесе пирĕн танксем тăшман танкĕсем хушшинех кĕрсе кайрĕç. Халĕ ĕнтĕ, пирĕн танксем нимĕçсен танкĕсемпе хутшăнса кайнă пирки, хăйсен танкĕсене лектерессинчен шикленсе, фашистсен çăханĕсем бомбăсем пăрахма пултарайман. Кунта ĕнтĕ ĕçе танкистсен çапăçури ăсталăхĕпе паттăрлăхĕ кăна татса пама пултарнă. Çак ăсталăхпа паттăрлăха пирĕн танкистсем кăтартса пачĕç.

Старши лейтенант Данилов командир пулса ертсе пыракан „КВ" танкăн экипажĕ хурçă гигантсен çапăçăвĕнче часах палăрчĕ. Вăл нимĕçсен 6 танкне çунтарса ячĕ, 4 танкне персе çĕмĕрчĕ. Хăйсен танкне 18 çĕртен лекнĕ пулин те, паттăр экипаж боеприпассемпе горючи пĕтиччен малалла çапăçнă, ирсĕр тăшмана пĕр шеллемесĕр аркатнă. Çав хаяр çапăçура пирĕн хăюллă та паттăр танкистсем нимĕçсен 50 танкне пĕтерсе тăкрĕç, вĕсем хĕснине тÿсеймесĕр, чĕрĕ юлнă нимĕçсем каялла тарма тытăнчĕç...

Кĕркунне Данилов хăйĕн хăватлă танкĕпе нимĕçсене Сталинград патĕнче аркатать. Кунта вĕсен танковăй чăсне Гварди ялавне параççĕ. Хĕрÿллĕ çапăçу хирĕнче вăл пĕрремĕш награда—Хĕрлĕ Ялав орденне илет. Вăл ĕнтĕ—гварди капитанĕ.

— Юратнă атте,—тесе çырать вăл тăван килне.—Эпир нимĕçе Атăл çине тухма памастпăр, Хĕрлĕ Çар боецĕн чĕри тапнă чухне нимĕçĕн юнлă атти пирĕн чăваш çĕрĕ çине нихăçан та пырса пусаймĕ. Ирĕклĕ çĕр çинче пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе тăван çĕршыва пулăшăр.

Часах Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче нимĕçе хирĕç хăватлă та çĕнтерÿллĕ наступлени пуçласа ярать. Иван Данилов тăракан гвардейски танковăй часть—малти ретре. Паттăр танкист, çĕнтерÿ туйăмĕпе хавхаланса, нимĕçсене татах та хаяррăнрах аркатса пырать. Декабрь уйăхĕнче вăл, 22 çулхи капитан-коммунист, иккĕмĕш чаплă награда—Ленин орденне илет.

Даниловăн 61 çулхи ашшĕ—Шупашкар районĕнчи Апаш ялсоветне кĕрекен Чăрăшкасси колхозĕн бригадирĕ Данил Романович Романов, Ферапонт Головатăйăн пуçарăвĕпе хавхаланса, хăйĕн ывăлĕ пек паттăрсем валли танксен колоннине тума 3.000 тенкĕ укçа хывать. Радио кашни ир çĕнĕрен-çĕнĕ, хаваслă хыпарсем кÿрсе тăрать. „Юлашки сехетре..." Çакă кĕске сăмахсем халăх чĕрине çĕклеççĕ. Халăх пĕтĕм вăйĕпе фронта пулăшать.

Сталинград патĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен çарĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Пирĕн хăватлă танксем малалла, Хĕвеланăçнелле каяççĕ. Анчах Данилов юлташăн паттăр кунçулĕ вăхăтсăр татăлать. Январĕн 20-мĕшĕнче вăл хăйĕн геройла пуçне çапăçу хирĕнче хурать. Тепĕр вунă кунран вăл нимĕç войскисене Сталинград патĕнче пуçĕпех пĕтерсе тăкни çинчен илтнĕ пулĕччĕ, пирĕн Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн саламне вуласа савăннă пулĕччĕ.

Çитĕ вăхăт, эпир ирсĕр фашистсене хамăр çĕршывран тĕпĕ-йĕрĕпех тимĕр шăпăрпа шăлса ывăтăпăр! Çитĕ вăхăт, пирĕн геройсен юнĕ тăкăннă çĕр çинче коммунист-агроном ĕмĕтленнĕ хăватлă тырпул ÿссе çитĕнĕ! Чи çывăх туссем пек пĕр-пĕрин çине тайăнса ларакан шултăра та сулмаклă пучахсем лăпкă çил тÿлеккĕн вĕрнипе пĕрпĕринпе ачашшăн пăшăлтатса калаçĕç, вĕсем пирĕн геройсен ячĕсене асăнĕç.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.